Районăн харсăр çыннисем

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

Пултарулăхĕ иксĕлми

Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 75 çул, Чăваш автономи обласне туса хунăранпа 100 çул çитнине анлăн уявлатпăр. Тăвайсемшĕн вара тепĕр юбилей – район йĕркеленнĕренпе 85 çул çитрĕ. Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче Енĕш Нăрвашри культура çуртĕнче паллă пулăмсем ячĕпе «Тăванлăх çулĕпе пĕрле утар-и?» уçă фестиваль иртнĕ. Унта ялсенчи пултарулăх коллективĕсем, уйрăм юрăçсем хутшăннă. Инçетри хăнасенчен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Илем» халăх ансамблĕ, Шуршăлти культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕсем пулни тăванлăхпа чăвашлăх уявне чăннипех илем кӳнĕ, пуянлатнă. Юрлас, ташлас енĕпе, сăмах, сцена ăсталăхĕпе тата ытти номинацисенче çĕнтернисене дипломсем панă. Çăварни кунĕ пулнă майăн волонтерсем пыллă икерчĕпе, сиплĕ куракăсенчен вĕретнĕ чейпе сăйланă уява килнисене. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Владимир Ванеркепе пай ертӳçи Оксана Кириллова та уяв вĕçленичченех пĕрле савăннă, ырлăх-сывлăх, пултарулăха ӳстерсе пыма, çĕкленӳллĕ кăмăл суннă. Çак проектăн авторĕсенчен пĕри ялти халăх театрĕн режиссерĕ Зоя Васильева пулнă. Вăл чăвашлăха упрас, ял халăхне канма хăтлă условисем туса парас тесе ырми-канми тăрăшакан районти чи харсăр культура çĕçенĕсенчен пĕри.

З.И.Васильева мартăн 10-мĕшĕнче Чăваш автономи обласне туса хунăранпа 100 çул çитнине халаллана мероприятисен марафонĕн пĕрремĕш уявне хутшăнма тӳр килнишĕн чăннипех савăннине пĕлтерчĕ. **«Чăваш Енĕн пуян историне, халăхĕн наци хăйне евĕрлĕхне, республикăпа, районсенчи паллă ентешсемпе мăнаçланнине тĕпе хурса йĕркеленĕ çак уява. Унăн пĕлтерĕшĕпе шухăшне палăртакан тĕп сăмах «Пĕрле» сăмах пулни яр-уççăн палăрчĕ унта. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев уявра «Чăваш автономи обласне йĕркеленĕренпе – 100 çул» юбилей медалĕпе пирĕн ентеше Вера Кузьминична Кузьминана пĕрремĕш чыслани те чуна пырса тиврĕ,–** хумханса каласа пачĕ Зоя Ивановна.**– 100 çулхи юбилей регион, район ят-сумне çĕклеме пулăштăр, тĕрлĕ ăрăвăн асĕнче юлтăр тесе хамăр патăмăрта та тĕрлĕ ĕçсем йĕркелеме палăртса хунă, хăшне-пĕрне пурнăçланă та ĕнтĕ».**

Малаллахи сăмахăм 2019 çулхи Театр çулталăкĕ пирки пулчĕ. Иртнĕ çул енĕш-нăрвашсем чăн-чăн культура марафонне пуçарса ячĕç тесен те йăнăш пулмĕ. Республикăри культура министерствин «Театр на все времена» проекчĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ «Тĕнчере çĕр тĕрлĕ кĕнчеле» шоу-программăпа районти ялсенче пулнă. Кунта вырăнти çыравçăсен хайлавĕсем пысăк вырăн йышăннă. Патăрьел районĕнчи ялсенче те кăтартнă ăна. Çапла икĕ районти сцена ăстисем пĕр-пĕрин опычĕпе, пултарулăхĕпе паллашни ĕçе çĕнĕлĕхсем кĕртме май парать. Пĕлтĕрхи çулла Кемĕр облаçĕнчи Прокопьевски районĕ 95 çул тултарнă ятпа халăхсем хушшинчи «Туссемпе пĕрле» наци культурисен фестивальне Тăвайри культура ĕçченĕсен «Тивлет» ушкăнĕпе Зоя Васильевапа ĕçтешĕсем те хутшăннă. Тăвайсем Çĕпĕр чăвашĕсемпе, унти ентешлĕхпе тахçантанпах çыхăну тытаççĕ. Республика кунне уявлама килмессерен унти «Хĕлхем» ансамбль районти ялти культура çурчĕсенче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарать. Пĕрлехи мероприятисем хатĕрлесе ирттерни халăхсен хушшинчи пĕрлĕхе вăйлатма, авалхи пуян культурăна, чĕлхене, йăла-йĕркесене упраса хăварма, малалла аталантарма ырă витĕм кӳрет. Çакăн пек пĕрлĕхре çĕршывăмăр çирĕпленсе пырать ĕнтĕ.

Тăвайри культура çурчĕн фойинче «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем» хисеплĕ ята тивĕçнисен сăн ӳкерчĕкĕсен стендне вырнаçтарнă. Вĕсенчен виççĕшĕ – Енĕш Нăрвашран. Пĕри – ялти музей заведующийĕ Владимир Петров, унтах культура пурнăçне аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывнă Николай Шутовăн сăн ӳкерчĕкĕ. Шел те, кун-çулĕ чире пула ытла та ир татăлнă унăн. Вăл ертсе пынă коллектива республика тулашĕнче те лайăх пĕлнĕ. Курăмлă ĕçсемшĕн сцена ăстисен ушкăнĕ халăх театрĕ ята тивĕçнĕ. Пушкăртра, Çĕпĕрте, Тутарта, Чĕмпĕр облаçĕнче кĕтнĕ хăнасем пулнă. Чăвашсене çутта кăларнă И.Яковлев çуралнă Кăнна Кушки ялĕнче хапăл кĕтсе илнĕ вĕсене. «Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ, Енĕш Нăрвашри чăвашсен пĕчĕк драма театрĕ тесе хаклана пулăттăм халĕ вĕсен ĕç-хĕлне»,–тет Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зоя Васильева. Çак хисеплĕ ята 2018 çулта тивĕçнĕ вăл. Шутовсен ĕçне малалла тăсса театра юратакансенчен пултаруллă ушкăн чăмăртама пултарнă.

Театр çулталăкĕнчи тепĕр проектне вара, «Шурă юр çинчи кĕл чечексем» ятлăскерне, шăпах Николай Андреевича халаллана Нăрвашри халăх театрĕ. Ытларах Н.Шутов выляна спектакльсенчи сыпăксемпе паллаштарнă сумлă мероприятие пухăннисене.

Ăçта кăна çитмен, мĕн чухлĕ спектакль куракан умне кăларман пулĕ Нăрваш артисчĕсем? Пĕр конкурсран та Тав хучĕсемсĕр таврăнман. Театр ĕçĕпе кăна çырлахмасть Зоя Васильева. Районта, республикăра иртекен фестиваль-конкурссенче куратăн харсăр хĕрарăма. Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ пултарулăх ушкăнĕсем те çитĕнĕвĕсемпе савăнтараççĕ. Иртнĕ уйăх пуçламăшĕнче, акă, Тăвайри культура çуртĕнче Астăвăмпа мухтав çулталăкне уçма хастар хутшăннă. Ун хыççăн Чăваш автономи обласне туса хунăранпа 100 çул çитнине халаллана «Тăван халăхăн иксĕлми çăлкуçĕ» фольклор фестивалĕ Енĕш Нăрвашра ăнăçлă иртнĕ. Районти пултаруллă фольклор ушкăнĕсем, ăста юрăçсем, маттур алĕç ăстисем хутшăнса, халăха чăваш юрри-ташшипе савăнтарнă, тĕрлĕ уявсен йăли-йĕркине сăнласа кăтартнă. Пĕрлехи вăйпа чăннипех асра юлмалли чăвашлăх уявĕ йĕркеленĕ тăвайсем çапла.

Ветерансен «Тĕпел» ушкăнĕ кӳршĕллĕ ялсене те концертпа çула тухать. Тинтерех Сăхăтпуçĕнче ăшшăн йышăннă, иртнĕ çул Патăрьелĕнче шăрантарнă вырăнти чăваш юррисене. «Пучах» агитбригада ĕç коллективĕсенче яланах кĕтнĕ хăна. Кушкăри ваттисен çуртĕнче канлĕх тупнă ветерансене те тимлĕхсĕр хăвармаççĕ Нăрваш артисчĕсем. Çĕнĕ çул уявĕнче «Ваттисен пиллĕхне манар мар» программăпа пулнă вĕсем патĕнче. Ку пархатарлă ĕçе шкул ачисене те явăçтараççĕ. Галина Русская ачасене юрлама, ташлама вĕрентет. Зоя Мижеева тата Екатерина Кузнецова ертсе пыракан «Веселые петельки» кружокра çамрăк ăстаçăсем ал ĕçне вĕренеççĕ. Халăх йăли-йĕркине упраса хăварас, несĕлсен тымарне çухатас мар тесе хăйсен тӳпине хываççĕ «Тĕпелçĕсемпе» «Сарпи» фольклор ушкăнĕ. Тăван халăхăн культурине, йăли-йĕркине, чăвашлăха упрама çамрăк ăрăва явăçтарас тĕллевпе клуб çумĕнче «Путене» ача-пăча театр студийĕ, «Хĕвелчĕк» ташă ушкăнĕ ĕçлеççĕ. **«Саймалçăсене» вара республика шайĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Ытларах Тăвай енре çуралса ӳснĕ авторсен юррисене кĕртетпĕр эпир концертсен программине. Петр Павловăн, Геннадий Масленниковăн, Анатолий Кирилловăн тата ыттисен юррисене куракансем тулли кăмăлтан йышăнаççĕ,»** – палăртса хăварчĕ Зоя Ивановна.

Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ ушкăнсене пĕр чăмăра пĕтĕçтерме ăсталăх та, тӳсĕмлĕх та, халăхпа ĕçлеме пĕлни те кирлĕ. Халăх театрне илес пулсан, ертӳçĕ тилхепине З.Васильева шанчăклăн та çирĕппĕн тытса пыни куçкĕретех. Зоя Ивановна ялти хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Светлана Михайлова ячĕпе ăшă сăмахсем каларĕ. Пĕр мероприятирен те юлмасть юрраташша ăстаскер. Усрава илнĕ ачисем те амăшĕпе пĕрле концертсенче юрлаççĕ, спектакльсенче выляççĕ.

Культура çуртĕнче ĕçлекенсем республика пĕлтерĕшлĕ ĕç-пуçа анлăн, çӳллĕ шайра ирттерни çинчен чарăнса тăни те вырăнлă пулĕ. Акă, Çеçпĕл Мишши премийĕн лауреатне Алексей Майраслов скульптор-монументалиста халаллана «Чăваш туйăмĕ сирĕнте ан чактăр, таса чун-чĕрепе чăваш калаçтăр!» фольклорпа этнографи фестивалĕ халĕ те ял çыннисен, Алексей Петровичăн çывăх çыннисен асĕнчех. З.Васильева режиссер, юрăç кăна мар, çыравçă та вăл. Хăй кĕвĕленĕ юррисемпе пĕрре кăна мар конкурссен лауреачĕ пулнă. «Килтĕм хăнана», «Эс те, эс те ман тăван», «Эй, хей çумăр çу», «Килсе курма васкарĕ», «Кумма», «Килтĕм-килтĕм хăнана» тата ыттисем чăвашрадиопа та, телевиденипе те янăраççĕ, çепĕç юррисем чун-чĕрене хускатаççĕ, хавхалантараççĕ. Уйрăм дисксем те кăларнă.

Театр коллективĕн малаpахри çулсенчи ĕçĕсем пирки

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

Юлашки çулсенче «Вырăнти культура çурчĕ» проекта пурнăçласа районта Чутей, Çĕнçырма ялĕсенче клубсем туса хута янă. Чылай культура учрежденийĕсенче юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн, кашни çынах çĕнĕ оборудованипе пуянлатнă, çĕнетнĕ зал-пӳлĕмсенче пултарулăха аталантарма, юрласа-ташласа савăнма, вăхăта усăллă ирттерме пултарать. Иртнĕ çул Енĕш Нăрвашра ялти культура çурчĕн тăррине тĕпрен юсанă. Кăçал вара ялсен территорийĕсенчи культура учрежденийĕсене хăтлăлатмалли программăпа килĕшӳллĕн республика бюджетĕнчен субсиди мелĕпе уйăрнă укçа-тенкĕпе (900 пин тенкĕ ытла) çурта юсаса йĕркене кĕртес ĕçсем малалла пурнăçланĕç.

те кăсăкланса ыйтса пĕлтĕм Зоя Ивановнаран. Коллектив Н.Айзманăн «Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ» пьеси тăрăх лартнă постановкăпа халăх театрĕсемпе драма коллективĕсен «Мухтав ахрăмĕ» фестивальне хутшăнса 4 номинацире дипломсем çĕнсе илнĕ. Киров хулинчи пĕтĕм Раççейри фестивале Нăрваш артисчĕсем «Эпир чăвашсем, чăвашах пуласшăн!» сценарипе (авторĕ З.Васильева) хутшăннă, наци культурине упрас тата аталантарас ĕçри çитĕнӳсемшĕн панă чи пысăк чыслава – ятарлă Гран-прине тивĕç пулнă. Сумлă жюри ялти халăх театрĕн режиссерĕн ăсталăхне уйрăммăн палăртса хăварнă. Вырăнти çыравçăсен ĕçĕсене те куракан патне çитерме тăрăшаççĕ сцена ăстисем. Тĕрлĕ çулсенче А.Суханăн (Никитинан) «Çĕнĕ ĕмĕрти хуняça», «Ватти çук та латти çук» (ачасен театр студийĕнче «Пĕчĕк хӳтĕлевçĕсем»), М.Арестован «Судьба» постановкисем те вырăн тупнă репертуарта. З.Васильеван «Пенси укçи мыскари» кулăшне курнă хыççăн залра ларакансенчен хăшĕсем хăйсене палласа илнĕ тесе калани те тĕрĕсех пулĕ. Ара, чăн пурнăçран илет-çке хайлавсен сюжечĕсене автор.

Зоя Ивановнана «ЧР музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ» хисеплĕ ятпа чысланă, Чăваш Республикин пуçлăхĕн Тавне тивĕçнĕ, ытти Дипломсемпе хисеп хучĕсем те чылай пухăннă. Виçĕмçул конкурс итогĕсемпе «Чăваш Республикинчи чи лайăх культура ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ.

Енĕш Нăрваш ялĕнчен культурăпа искусство çыннисем нумайăн тухнă. Раççейĕпех паллă художниксем, скульпторсем, артистсем, çыравçăсем... Артистсем çинчен сăмах пуçарсан, СССР халăх артистне Вера Кузьминична Кузьминана ăшшăн аса илет. Ача чухнех хăйне вăл выляннă рольсенче курнă. Ун пекех пысăк сцена çине тухас ĕмĕт тĕвĕленнĕ. 97 çулта та сцена çинчен çынсене савăнтарать пирĕн ентеш. Вера Кузьминична яла килес-тăвас пулсан унпа тĕл пулса калаçма васкать Зоя Ивановна. Вăл уншăн ачаран идеал пулнă-çке.

Зоя, уçă саслăскер, шкулта вĕреннĕ чухнех концертсенче юрланă. Ашшĕпе амăшĕ çумне ларса вĕсем юрланине итлеме юратнă, пĕрле ĕнĕрлесе ларнă. Хаçатпа та çыхăну тытнă хĕрача. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне «Ял ĕçченĕ» хаçата ятне кăтартмасăр Данилова хушаматпа (унăн хĕр чухнехи хушамачĕ) «Артист пуласшăн» ятлă заметка çырса янă. Материалĕ пичетленсе тухсан юлташĕсем авторĕ кам пулнине тӳрех тавçăрса илнĕ. «Пирĕн Зоя çырнă ăна»,–тенĕ пурте.

Культура ĕçченĕ пулас ĕмĕт хĕре Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищине илсе çитернĕ. Професси алла илсен тăван тăрăха хавхаланса таврăннă. Çамрăксемпе концертсемпе çӳренĕ, театр ĕçне вăйлатса янă. Енĕш Нăрвашри пек халăх театрĕ халĕ районта Тăвай ялĕнче кăна. Шăпи çине ӳпкелешмест Зоя Ивановна. Юратнă ĕç, сцена, яланах хапăл йышăнакан куракансем, çумра ăнланакан мăшăр, çын хушшинче хисеплĕ ачисем. Культура ĕçченĕн тĕрлĕ çĕре тухса çӳреме тивет, халиччен мăшăрĕнчен пĕрре те ӳпкев сăмахĕ илтмен. Хĕрпе ывăлне пурнăç çулĕ çине тăратнă. Хĕрĕ медучилищĕрен вĕренсе тухнă. Икĕ ача амăшĕ. Канашри врач практикин офисĕн медсестри Олеся Владимировна кăçал халăх сасăлавĕ тăрăх «Чи лайăх медсестра» ята, çак кунсенче ЧР сывлăх сыхлав министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ. Ывăлĕ Василий Владимирович та Канашрах професси пĕлĕвĕ илнĕ. Халĕ чукун çул çинче ĕçлет.

Тăвай енре Зоя Ивановна хăйĕн ĕçĕпе тахçанах пысăк авторитет çĕнсе илнĕ. Районта пысăк пĕлтерĕшлĕ культура ĕç пулăмĕ иртнĕ чух З.Васильева яланах пулăшма хатĕр. Юнашар шанчăклă ĕçтешсем – Галина Русская, Вячеслав Ефимов, Зоя Мижеева, Екатерина Кузнецова, Арина Алексеева пĕрле чухне ĕçсем ăнăçса пыраççĕ.

Паянхи кун Зоя Васильевана Енĕш Нăрвашран тухнă паллă культурăпа искусство çыннисен ĕçне сумлăн малалла туса пыракане тесе калани вырăнлă пулĕ.

Р.ШУМОВА.

ХАКЛАВСЕМ

Галина ГАВРИЛОВА, пенсионерка: Зоя Васильева ертсе пыракан «Тĕпел» ушкăна çӳрени кулленхи пурнăçа илемлетет. Юрланă майăн вăхăт иртни сисĕнмест, чуна çывăх кĕвĕ пĕрпĕр эмелтен те хаклăрах пек туйăнать. Чăваш тумĕпе сцена çине тухсан залра ларакансен сăнĕсем çуталаççĕ. Вĕсен кăмăлĕсем çĕкленни эпир тăвакан ĕçĕн ырă çимĕçĕ мар-иха? Зоя Ивановна – ертӳçĕ кăна мар, пирĕншĕн чи çывăх тус. Кашнин патнех çул хывма пĕлет вăл.

Петр НИКИФОРОВ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ: Зоя Ивановна – пысăк тава тивĕçлĕ чăн-чăн культура ĕçченĕ. Сцена çинче хăйне тыткалани, сăмах-юмахĕ, юрри-ташши, тĕрлĕ роль калăплани – йăлтах килĕшӳллĕ те илĕртӳллĕ пулса тухать унăн. Çынлăх, чун-чĕре илемĕ, искусствăна парăнни, ĕçшĕн хыпса çунни тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми унра. Йывăр вăхăтра халăх театрĕн тилхепине алла илсе паян кунччен çирĕп тытса пырать вăл. Пултарулăхĕпе, илемлĕ те çепĕç сассипе, йăлтăр куллипе çынсене ырă кăмăл-туйăм парнелет.

Валерий ЧАЙКИН, Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ: Зоя Васильева пек чуна парса ĕçлекенсем çинче тытăнса тăрать те паян районти культура пурнăçĕ.

Палăртнине çине тăрса пурнăçлани, хăть мĕнле мероприятие те илемлĕ, тарăн содержаниллĕ, куракана килĕшӳллĕ тума пĕлни – çаксемпе палăрса тăрать те Нăрваш пики.

Пĕрле пухăнса хĕле ăсатрăмăр

Астăвăмпа мухтав çулталăкĕнче кăçал пуш уйăхĕн çиччĕмĕшĕнче район çыннисем пĕрле пухăнса хĕле ăсатрĕç, маттур хĕрарăмсене саламларĕç, çитĕнӳсем сунчĕç.

Тăвай енри культура çурчĕ умĕнче ирех шăплăх хускалчĕ. Суту-илӳ тумалли, вăйă-кулă, тĕрлĕ конкурс ирттермелли вырăнсене майлама пуçларĕç тивĕçлĕ çынсем. «Сывă-и, çуркунне?» тата «Сывă пул, хĕл» тесе çырнисене вырнаçтарчĕç, Хĕл карчăкĕ те пур ав, тата ытти те. Лапамра хаваслă кĕвĕ янăрама, сăмсана техĕмлĕ шашлăк тата сарă хĕвеле аса илтерекен пĕлĕм шăрши кăтăклама пуçларĕ. Çуллă икерчĕсен куравĕ пурне те килĕшрĕ, хĕрача сăнарне, чечексем тата ыттисене ăсталанă вĕсенчен районти библиотекăсенче ĕçлекен хĕрсем. Программăна ертсе пыракан А.Алексеева пухăннисене вĕри чейпе пĕлĕм тутанса пăхма сĕнчĕ кĕçех. Чылайăшĕ активрĕ тутлă юр-вара. Н.Уськина, С.Константинова, Н.Камасева тата Л.Андреева хатĕрленĕ икерчĕсем чи техĕмлисем пулчĕç.

Сцена çине малтан ачасем улăхрĕç, пултарулăх коллективĕсем юрă хыççăн юрă шăрантарчĕç. Унтан театрализациленĕ программа пуçланчĕ, хĕл хăй вырăнне хăварма шанчăклă çын шырама тытăнчĕ. Пĕри те тепри хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç, анчах йышăнмарĕ вĕсене. Çуркуннене кăна ăшшăн кĕтсе илчĕ вăл.

–Юрату, шанчăк, çепĕçлĕх, тăрăшулăх туйăмĕсем ытларах хуçаланаççĕ çак кунсенче Тăвай енре. Эпир, арçынсем, сире тӳсĕмлĕхшĕн, ачасемшĕн, çемьери хăтлăхшăн, тивлетшĕн тав тăватпăр. Эсир çемье вучахне упратăр, çамрăк ăрăва лайăх воспитани парассишĕн тăрăшатăр, ĕçре тата обществăлла пурнăçра çитĕнӳсем тăватăр. Хăвăр ялах илемлĕ те çамрăк курăнатăр. Хаклă хĕрарăмсем, сире пурне те çуркуннехи пĕрремĕш уявпа саламлатăп. Çирĕп сывлăхлă, вăрăм ĕмĕрлĕ, телейлĕ пулăр пурте,–терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ В.Ванерке çакăн хыççăн. Ял тăрăхĕсенчи клубсенче тăрăшакансем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма тухрĕç кĕçех сцена çине.

«Тăвайри кооператив» потребобщество киоскĕсем умĕнче çынсем хĕвĕшеççĕ кăна. Çăкăрпа булка изделийĕсем туянаççĕ, теприсем – шашлăк, виççĕмĕшсем ытти тавара хакласççĕ.

Уйрăм çынсем те нумайăн тухнă суту-илӳ тума. Малтанхи çулсенчи пекех йывăç тураттисенчен тунă ручкăпа ытти япаласем сĕнекенсем те килнĕ уява. Пĕчĕккисем аттракционсем умĕнче тапăртатаççĕ. Батутпа чуччу çинче сиксе чылайччен кăмăлĕсене çĕклерĕç ачасем.

Кире пуканĕ йăтса хăйсен маттурлăхне кăтартакан спортсменсене те хавхалантарчĕç уяврисем çак кун. Алă вăйне виçекеннисем те çĕнтерме ăнтăлчĕç.

Çулăм çатăртатса çуннă май Хĕл карчăкки тĕрлĕ амака хăвалама пуçларĕ кĕçех. «Чирчĕр кайтăр, чир-чĕр кайтăр!»–тесе кăшкăрчĕç хăш-пĕрисем çав самантра. Çулăмпа пĕрле хуйхă-суйхă, кӳренӳ, инкек аякри çула тухрĕç.

Çӳçеллĕ, илемлĕ чечеклĕ пысăк тутăр çыхнă хĕрсемпе хĕрарăмсенчен куç илес килмерĕ. Вĕсен пит-куçĕсем ăшă çуркунне пек хаваслăхпа йăлкăшрĕç. Район центрĕнчи культура çурчĕ умĕнче кĕвĕ çапла таврана чылайччен саланчĕ.

Уяв программине кăçал чăвашла йĕркеленине палăртса хăвармалла.

А.НИКИТИНА.
Сăн ӳкерчĕксенче: уяв саманчĕсем.